# СĂВАПЛĂ ПАВЕЛ АПОСТОЛ ТИМОФЕЙ ПАТНЕ ЯНĂ ПĔРРЕМĔШ ÇЫРУ

### 1-мĕш сыпăк

*Саламлани*

1 Хамăра Çăлакан Туррăмăр тата хамăр шанчăкămăр Иисус
Христос Хуçамăр хушнипе Унăн апостолĕ пулма тивĕçнĕ Павел-
ран — 2 ĕненӳри чăн-чăн ывăлăма Тимофея. Сана Атте Туррăмăрпа
Христос Иисус Хуçамăртан ырăлăх, тивлет тата канăçлăх пултăр.

*Суя вĕрентӳсенчен асăрхаттарни*

3 Хам Македоние çула тухас умĕн эпĕ сана Ефесрах юлма ыйт-
нăччĕ, унти суя вĕрентӳсем саракансене чарăнма хушса ӳкĕтлеме
ыйтсаттăм. 4 Эсĕ вĕсене халап хыççăн кайма, йăх-несĕл тымарĕ-
сене тĕпчесе вĕççĕр-хĕрсĕр аппаланма чар. Унашкал аппаланни
тавлаштарса ярать кăна, Турă хушнă пек ĕненме чăрмантарать
кăна. 5 Ӳкĕтĕн тĕллевĕ вара — таса чĕререн, таса чунран, чăн-чăн
ĕненӳрен килекен юратулăх. 6 Хăшĕ-пĕрисем, çак тĕллеврен пă-
рăнса, пуш сăмах çаптарас çул çине тăнă. 7 Вĕсем Турă йĕркине
вĕрентесшĕн, анчах та хăйсем мĕн каланине, мĕне ĕнентересшĕн
пулнине хăйсем те ăнланмаççĕ.
8 Саккунпа тĕрĕс усă куракан çыншăн саккун лайăххине эпир
пĕлетпĕр. 9 Унашкал çын хăй те çакна лайăх пĕлет: саккуна тӳрĕ
пурăнакансем валли çырман. Саккун вăл — йĕркесĕррисемпе
пăхăнманнисем валли, Турра хисеплеменнисемпе çылăхлисем
валли, пăсăккисемпе ирсĕррисем валли, ашшĕ-амăшĕ çине алă

çĕклекенсем валли, çын вĕлерекенсем валли, [10] ясаррисем валли,
арçынпа асакан арçынсем валли, чура сутуçисем валли, элекçĕ-
сем, выльăхпа асакан арçынсем валли, суеçĕсем, тупа тунине
пăсакансем валли, тĕрĕс вĕрентĕве хирĕçлекен мĕн пур çын вал-
ли. [11] Ырăлăхлă Туррăн мухтавлă Ырă Хыпарне пĕлтерме мана та
шанса панă.

*Хĕрхеннĕшĕн Турра тав туни*

[12] Хама вăй-хăват панă Христос Иисус Хуçамăра тав тăватăп.
Вăл мана шанса Хăйшĕн ĕçлеме ирĕк пачĕ. [13] Эпĕ малтан Христоса ĕненекенсене хурлаттăм, хĕсĕрлеттĕм, кӳрентереттĕм. Ан-
чах та эпĕ пĕлменрен, ĕненменрен çапла хăтланнă пирки Турă
мана хĕрхенчĕ. [14] Иисус Христоса ĕненсе юратсан вара чун-чĕ-
рем Хуçамăрăн Иисус Христосăн ырăлăхĕпе тулчĕ. [15] Эпĕ калани
чăн, çав сăмаха пирĕн тĕппипех йышăнмалла: Христос Иисус
çак тĕнчене çылăхлисене çăлма килнĕ. Эпĕ – çылăхлисенчен те
çылăхлăрах. [16] Христос Иисус Хăйĕн виçесĕр чăтăмлăхне чи мал-
тан ман урлă палăрттăр тесе, малашлăхра Хăйне ĕненекенсем
ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулмашкăн манра тĕслĕх курччăр тесе Турă
мана хĕрхенчĕ те. [17] Ĕмĕрлĕх Патшине, вилĕмсĕр те курăнми
пĕртен-пĕр ăсларан та ăслă Турра, ĕмĕр-ĕмĕр чыс та мухтав пул-
тăр. Аминь.

[18] Тимофей ывăлăм! Сан пирки тахçанах каланă пророкла сă-
махсемпе килĕшӳллĕн эпĕ сана канаш паратăп. Çав сăмахсем-
пе хĕç-пăшалланса лайăх çар çынни пек çапăç, [19] ĕненӳллĕ те
таса чунлă пул. Хăшĕ-пĕрисем çав пахалăхсене çухатрĕç те, вĕсен
ĕненĕвĕ карап путнă пек путланчĕ. [20] Çавнашкаллисем хушшин-
че – Именейпе Александр. Эпĕ вĕсене, Турра хурласа калаçма
юраманнине пĕлччĕр тесе, шуйттана патăм.

**2-мĕш сыпăк**

*Кĕлтума вĕрентни*

[1] Чи малтанах эпĕ сана çакна каласшăн: мĕн пур çынсемшĕн
Турра кĕлтăвăр, тархаслăр, йăлăнăр, тав тăвăр. [2] Хамăрăн лăпкăн
та канăçлăн, Турра хисеплесе, тасан пурăнмалла пултăрччĕ тесе,
патшасемшĕн те, мĕн пур пуçлăхсемшĕн те кĕлтăвăр. [3] Çапла ту-
ни Турăшăн, Çăлаканăмăршăн аван, юрăхлă. [4] Турă мĕн пур çын

ҫӑлантӑр, чӑнлӑха пӗлсе ҫиттӗр тет. 5 Мӗншӗн тесен Турӑ пӗрре,
этемпе Турӑ хушшинче Тӑраканни те – Иисус Христос ҫын –
пӗрре. 6 Мӗн пур ҫынсене ҫылӑхран тӳлесе илес тесе, Вӑл Хӑйӗн
пурӑнӑҫне панӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче ҫапла ҫирӗплетсе пӗлтернине
7 ытти халӑхсем хушшине сармашкӑн мана ӳкӗтлевҫӗ тата апос-
тол пулма суйланӑ. Эпӗ суймастӑп, Христос умӗнче чӑннине ка-
латӑп! Мана Турра пӗлмен халӑхсене чӑнлӑхпа ӗненӳ ҫинчен
каласа вӗрентме суйланӑ.

8 Ҫапла ӗнтӗ, эпӗ арҫынсен пур ял-хулара та кӗлтумалла тетӗп.
Вӗсем ҫилленмесӗр, иккӗленмесӗр аллисене Турӑ патнелле таса
шухӑшпа ҫӗклеччӗр тетӗп. 9 Тата хӗрарӑмсем те тирпейлӗ тумтир-
пе ҫӳреччӗр, вӑтанма, таса шухӑшлӑ пулма пӗлччӗр. Ҫӳҫне-пуҫне
капӑрлатас, ылтӑнпа тата ӗнчӗпе илемленес, чаплӑ тум тӑхӑнас
вырӑнне 10 ырӑ ӗҫ туса палӑрччӑр. Турра хисеплекен хӗрарӑмсен
ҫапла пулмалла та. 11 Ӳкӗтсене хӗрарӑм пӗр сӑмахсӑр, хирӗҫле-
месӗр итлетӗр. 12 Хӗрарӑм арҫынна ан вӗренттӗр, унпа ан хуҫа-
лантӑр, чӗнмесӗр тӑтӑр. 13 Ҫакна эпӗ акӑ мӗншӗн калатӑп: Турӑ
малтан Адама пултарнӑ, кайран – Евӑна. 14 Адам хӑй улталанман,
хӗрарӑм, илӗртӗнсе, ҫылӑха кӗнӗ. 15 Анчах та хӗрарӑм ача ҫуратса
ӳстерсе ҫӑлӑнма пултарать. Паллах, ҫӑлӑнас тесессӗн унӑн ӗненсе,
юратса, таса, виҫине пӗлсе пурӑнмалла.

## 3-мӗш сыпӑк

*Чиркӳ пуҫлӑхӗсен мӗнле пулмалла*

1 Чӑннипех, кам чиркӳ пуҫлӑхӗ* пуласшӑн, ҫав ырӑ ӗҫ тӑвас-
шӑн. 2 Анчах та чиркӳ пуҫлӑхӗн никам тиркейми тӳрӗ пурӑн-
малла: пӗрре кӑна авланмалла, хӑйне хӑй тытма пӗлмелле. Унӑн
таса шухӑш-кӑмӑллӑ, йӗркеллӗ, тараватлӑ пулмалла, вӗрентме
пӗлмелле. 3 Чиркӳ пуҫлӑхӗн ӗҫкӗҫ, ҫын ҫине алӑ ҫӗклекен, чӑр-
кӑш, хӑй уссишӗн тӑрӑшакан, мулшӑн ҫунакан пулмалла мар.
Вӑл йӑваш та лӑпкӑ ҫын пултӑр. 4 Вӑл лайӑх кил хуҫи, лайӑх аш-
шӗ пултӑр, ачисем ӑна хисеплеччӗр, итлеччӗр. 5 Енчен те ҫын
хӑйӗн кил-йышне, хуҫалӑхне йӗркеллӗ тытаймасть пулсан, еп-
ле-ха вӑл Турӑ Чиркӗвӗшӗн тӑрӑшайтӑр? 6 Чиркӳ пуҫлӑхне анчах-
рах тӗне кӗнисене лартмалла мар, мӗншӗн тесен унашкалли

* 3:1 *Чиркӳ пуҫлӑхӗ* – грекла епископ.

мăнкăмăлланса кайма пултарӗ. Вара, шуйттан пекех, суд айăп-
лавне тивӗç пулӗ. [7] Тата чиркӳ пуçлăхӗ çинчен чиркӗве çӳремен-
нисем те ырăпа калаçчăр. Ун пирки япăх калаççан унăн шуйттан
танатине лекмелле пулӗ.

*Чиркӳри пулăшуçăсен мӗнле пулмалла*

[8] Çавнашкалах диаконсем* те хисепе тивӗç çынсем пулмал-
ла. Вӗсем икӗ питлӗ, ӗçкӗç, хăй уссишӗн тăрăшакан çынсем ан
пулччăр. [9] Ӗненӳ вăрттăнлăхне вӗсем таса чунӗсенче упраччăр.
[10] Чиркӳри пулăшуçă пулас текенсене вара малтан тӗрӗслесе пăх-
малла, кăлтăк-сăлтăк тупăнмасан тин чиркӳре ӗçлесе тăма ирӗк
памалла. [11] Чиркӳре пулăшса тăракан хӗрарăмсен те хисепе тивӗç
пулмалла. Вӗсем элекçӗсем ан пулччăр, хăйсене хăйсем тытма
пӗлччӗр, пур енчен те шанчăклă пулччăр. [12] Чиркӳри пулăшуçă
та пӗрре кăна авланнă çын пулмалла. Вăл ачи-пăчине те, хуçа-
лăхне те лайăх пăхаканскер пултăр. [13] Мӗншӗн тесен ӗçӗсене ла-
йăх туса пынă чиркӳри пулăшуçăсем аслăрах вырăна кӗме тивӗ-
çеççӗ, Христос Иисуса ӗненсе вӗсем хăюлланаççӗ.

*Пирӗн ӗненӗвӗн вăрттăнлăхӗ*

[14] Çакна эпӗ сан патна часах çитсе курасса шанса çыратăп.
[15] Эпӗ часах пыраймасан, хăвна Турă çуртӗнче епле тыткаламал-
лине пӗлсе тăтăр тетӗп. Турă çурчӗ вăл – чӗрӗ Туррăн Чиркӗвӗ,
чăнлăх никӗсӗпе тӗрекӗ. [16] Паллах, эпир Турра хисепленин вăрт-
тăнлăхӗ пысăкран та пысăк: Турă ӳтленсе килнӗ, Вăл Кам пул-
нине Сывлăш çирӗплетнӗ, Ăна ангелсем те курнă, Ун çинчен
ытти халăхсене ӳкӗтлесе вӗрентнӗ, тӗнче Ăна ӗненсе йышăннă,
тӳпене Вăл мухтавлăхпа çӗкленнӗ.

## 4-мӗш сыпăк

*Ӗненме пăрахас вăхăтсем çинчен калани*

[1] Юлашки вăхăтсенче хăшӗ-пӗрисем ӗненме пăрахасси çинчен
Святой Сывлăш татăклăн калать. Вӗсем аташтаракан сывлăш-
сене итлӗç, шуйттанла вӗрентӳсем хыççăн кайӗç. [2] Çавнашкал
вӗрентӳсене икӗ питлӗ, çунса кӗлленнӗ чунлă суя вӗрентӳçӗсем

---

* 3:8 *Диакон* – малтанхи ӗненекен ушкăнсенчи хуçалăх енӗпе ӗçлекен.

сарĕç. 3 Вĕсем мăшăрланма, хăш-пĕр апат-çимĕçе çиме чарĕç.
Анчах та ĕненекенсем, чăнлăха пĕлекенсем тав туса çиччĕр тесе
пур апат-çимĕçе те Турă пултарнă-çке-ха. 4 Турă пултарни вара
йăлтах лайăх, тав туса йышăнсассăн йăлтах аван, 5 мĕншĕн тесен
вăл Турă сăмахĕпе тата кĕлĕ тунипе сăвапланать.

*Христосăн лайăх тарçи*

6 Эсĕ çакна ĕненекен тăвансене ăнлантарса парсассăн, Иисус
Христосăн лайăх тарçи пулатăн. Лайăх тарçă вара ĕненӳ сăма-
хĕсенчен тата хăй йышăннă ырă вĕрентӳрен вăй-хăват илет.
7 Карчăк-кĕрчĕкĕн юрăхсăр сăмах-юмахне итлессинчен пăрăн,
Турра хисеплессине аталантар. 8 Мĕншĕн тесен ӳт-пĕве ата-
лантарни пĕр енчен кăна усăллă, Турра хисеплессине аталан-
тарни вара пур енчен те усăллă. Вăл пире хальхи пурăнăçра та
шанчăк парать, ĕмĕрлĕх пурăнăçа кĕме те шантарать. 9 Сăма-
хăм тĕрĕс, ăна пурте тĕппипех йышăнма тивĕç. 10 Мĕншĕн те-
сен эпир чĕрĕ Турра шаннăран тăрăшатпăр, хур кăтартнине
тӳсетпĕр. Чĕрĕ Турă вара – пур çынна та, уйрăммăнах ĕнене-
кенсене, Çăлакан.

11 Çапла каласа ӳкĕтле, вĕрент. 12 Сана çамрăк тесе никам та
çӳлтен ан пăхтăр. Ĕненекенсем санăн сăмахна, пурăнăçна, юра-
тулăхна, чун-чĕмне, ĕненĕвне, тасалăхна тĕслĕх выранне хуччăр.
13 Эпĕ пыриччен эсĕ çынсене Çырнине вуласа пар, ӳкĕтле, вĕ-
рент. 14 Пророкла каланисемпе килĕшӳллĕн священниксем алă
хунипе хăвна панă пултарулăхна сая ан яр. 15 Пурин куçĕ умĕнче
те сан çитĕнĕвӳсем паллă пулччăр тесен, яланах тивĕçӳ çинчен
шухăшла, пĕтĕм чунна парса тăрăш. 16 Хăвна та, ху мĕне вĕрент-
нине те лайăхрах пĕлме тăрăш. Çапла тусассăн çеç эсĕ хăвна та,
хăвна итлекенсене те çăлма пултарăн.

## 5-мĕш сыпăк

*Ĕненекенсем умĕнче хăвна мĕнле тыткаламалла*

1 Ватă çынна ӳпкелешмесĕр, аçу выранне хурса, çамрăксене
шăллу выранне хурса ӳкĕтле. 2 Карчăксене аннӳ выранне хурса,
çамрăк хĕрарăмсене йăмăку выранне хурса таса чунлăн ӳкĕтле.

3 Хăр тăлăх тăрса юлнă арăмсене хисеплесе пулăш. 4 Енчен те
тăлăх арăмăн ачисем е мăнукĕсем пулсассăн, вĕсем чи малтан

кил-йышне хисеплеме вĕренччĕр. Ачи-пăчисем ашшĕ-амăшне
ырăпа тавăрччăр. Çапла туни Турра юрăхлă. [5] Чăн-чăн тăлăх
арăм, пĕччен юлсан та, Турра шанать, кунĕн-çĕрĕн Турра йăлăн-
са кĕлтăвать. [6] Киленсе кăна пурăнакан тăлăх арăм вара чĕрĕллех
вилнĕ пулать. [7] Çаксене йăлтах эсĕ вĕсене каласа ăнлантар. Вара
вĕсем тасан пурăнĕç. [8] Кам тăванĕсемшĕн, уйрăммăнах кил-йы-
шĕшĕн, тăрăшмасть, çав ĕненӳрен пăраннă, унашкалли ĕненмен
çынран та япăхрах. [9] Утмăл çула çитнисене, пĕрре кăна качча
кайнисене чиркӳри тăлăх арăмсен шутне кĕрт. [10] Çав тăлăх арăм-
сен ырă ĕçĕсемпе палăрмалла: ачисене пăхса ӳстермелле, ĕнене-
кен çул çӳренсемпе тарават пулмалла, ĕненекен тăвансен урисе-
не çуса ямалла, инкеке лекнисене пулăшмалла, кирек епле ырă
ĕçе те тăрăшса тумалла. [11] Çамрăккисене вара чиркӳри тăлăх
арăмсен шутне ан кĕрт. Мĕншĕн тесен Христоса чунтан парăнас
вырăнне вĕсем ӳт-пӳ хистени хыççăн каяççĕ, качча тухас шухăш-
па пурăнаççĕ. [12] Вĕсем ĕненĕве чунтан парăнмашкăн маларах
панă сăмахне тытмаççĕ, çавăнпа та айăпа тивĕçлĕ. [13] Тата вĕсем
ĕçсĕр аптăраса килрен киле çӳреме хăнăхаççĕ. Вĕсем ĕçсĕр аптă-
раса çӳреççĕ кăна мар, элек сараççĕ, кирлĕ-кирлĕ мар çĕре хут-
шăнса кĕрсе каяççĕ, калама юраманнине калаççĕ. [14] Çапла вара,
çамрăк тăлăх арăмсене манăн качча кайма, ача-пăча çуратма,
кил-çурта пăхса тăма хушас килет. Çапла тусан вĕсем хамăр тăш-
мансене усал сăмах сарма сăлтав памĕччĕç. [15] Вĕсенчен хăшĕ-пĕ-
ри, ĕненме пăрахса, шуйттан хыççăн кайрĕ те ĕнтĕ. [16] Ĕнене-
кенсен кил-йышĕнче тăлăх арăм пур пулсан, чиркĕве йывăр ан
пултăр тесе, тăлăха хăйсемех пулăшчăр. Вара чиркӳ хăр тăлăх
арăмсене пулăшма вăй çитерĕ.

[17] Чиркĕве ертсе пыракан пресвитерсене*, уйрăммăнах тăрăш-
са ӳкĕтлекеннисене, вĕрентекеннисене, ыттисенчен ытларах
хисепле. [18] Мĕншĕн тесен Çырнинче çапла каланă: «Авăн аша-
кан вăкăрăн çăварне ан хупла» тата «Ĕçлекен çын тӳлев илме
тивĕçлĕ» (Саккуна астутарни 25:4; Лука 10:7). [19] Иккĕн е виççĕн
айăп кăтартмасăр пресвитера айăпланине ан йышăн. [20] Çылăха
кĕрекенсене, ыттисем хăраччăр тесе, пĕтĕм халăх умĕнче питле.
[21] Турăпа Иисус Христос Хуçамăр тата çӳлти престол патĕнчи

* 5:17 *Пресвитер* – малтанхи ĕненекен ушкăнсенчи вĕрентсе ӳкĕтлекен тата ертсе пыракан.

ангелсем умӗнче маларах асӑрхаттарнине тытса пыма хушатӑп.
Никама та мала ан хур, кӑмӑлу хыççӑн ан кай. 22 Алӑ хумалли
йӑлана та васкаса ан ту, пӗлнӗ-пӗлмен çынна чиркӳре ӗçлекен
туса, унӑн çылӑхӗсене ан хутшӑн. Чун тасалӑхне упра. 23 Шыв
ӗçсе кӑна ан пурӑн, малашне кӑштах хӗрлӗ эрех те ӗçкеле. Вара
вар-хырӑмна усӑ пулӗ, тӑтӑшах чирлемӗн.

24 Хӑш-пӗр çынсем çылӑха кӗни уççӑнах палӑрать, вӗсем айӑп-
ланасси те халех курӑнать. Теприсен çылӑхӗсем вара каярахпа
тин паллӑ пулаççӗ. 25 Ырӑ ӗçсем те çавнашкалах палӑраççӗ; енчен
те вӗсем ырӑ мар пулсан, пытарӑнса юлаймӗç.

## 6-мӗш сыпӑк

1 Турӑ ятне тата Унӑн вӗрентӗвне хур тума парас мар тесен, пус-
мӑрта пурӑнакан чурасен хӑйсен хуçисене хисеплемелле. 2 Хӑш
чурасен хуçисем хӑйсем те Турра ӗненеççӗ пулсан, вӗсем пирӗн
ӗненекен тӑвансем-ха тесе, чурасен хӑйсен хуçисене хисеплеме-
сӗр тӑмалла мар. Пачах урӑхла, хуçисем хӑйсен савнӑ ӗненекен
тӑванӗсем, ырӑ тӑваканӗсем пулнине кура, чурасен хуçисемшӗн
тата лайӑхрах тӑрӑшса ӗçлемелле. Çапла ӳкӗтлесе вӗрент.

### *Суя вӗрентӳ тата чӑн-чӑн пуянлӑх*

3 Кам та кам урӑхла вӗрентет, Иисус Христос Хуçамӑрӑн тӗрӗс
сӑмахӗсемпе тата Турра хисеплемелли вӗрентӳпе килӗшмест, –
4 çавӑ мӑнкӑмӑллӑ, вӑл нимӗн те пӗлмест. Анчах та, çиеле тухас-
шӑн, яланах тавлашать. Тавлашусем вара кӗвӗçӳ, хирӗçӳ, йывӑр
сӑмах, киревсӗр шанманлӑх çуратаççӗ. 5 Усӑсӑр тавлашусем пӑсӑк
ӑслӑ çынсем хушшинче сиксе тухаççӗ. Вӗсем, чӑнлӑха çухатса,
Турра хисеплени пуйтарать тесе шухӑшлаççӗ. Унашкаллисемпе
ан çыхлан*. 6 Мӗн пуррипе çырлахма пӗлекен çынсемшӗн Турра
хисеплени, чӑнах та, пысӑк пуянлӑх.

7 Мӗншӗн тесен эпир ку тӗнчене пуш алӑпа килнӗ, каясса
та, паллах, пуш алӑпах кайӑпӑр. 8 Çимелли, тумланмалли пулсас-
сӑн çырлахӑпӑр. 9 Пуяс текенсем вара, шуйттан илӗртнипе улта-
ланса, танатана çакланаççӗ. Вара вӗсем тӗрлӗ ӑссӑр та сиенлӗ
шухӑш-кӑмӑл хыççӑн кайса шар кураççӗ, пӗтеççӗ. 10 Мӗншӗн

* 6:5 Хӑш-пӗр авалхи ал çырусенче юлашки пуплев çук.

тесен пĕтĕм инкек-синкек сăлтавĕ – укçана юратни. Хăшĕ-пĕри, укçа хыççăн хăваласа, ĕненĕвĕн тĕрĕс çулĕнчен пăрăнса кайрĕç те хăйсене валли хăйсемех нумай хуйхă тупрĕç.

*Ĕненӳшĕн чыслăн кĕрешесси*

[11] Эсĕ вара, Туррăн çынни, унашкаллинчен пăрăнса çӳре; тӳ-
рĕлĕх, Турра хисеплени, ĕненӳ, юратулăх, чăтăмлăх, йăвашлăх
патне ăнтăл. [12] Эсĕ ĕненӳшĕн чыслăн кĕреш. Сана ĕмĕрлĕх пурă-
нăçа кĕмешкĕн суйласа илнĕ. Эсĕ ун çинчен нумай çын умĕнче
аван çирĕплетсе пĕлтертĕн. Ĕмĕрлĕх пурăнăçа кĕресчĕ тесе тă-
рăш. [13] Пурне те пурăнăç паракан Турă ячĕпе тата Понтий Пи-
лат умĕнче Хăй çинчен чаплăн каласа пĕлтернĕ Христос Иисус
ячĕпе сана çапла хушса калатăп: [14] Иисус Христос Хуçамăр теп-
ре киличченех хăвна мĕн хушнине тасан та лайăххăн туса пу-
рăн. [15] Палăртнă вăхăт çитсессĕн пĕртен-пĕр, хăватлă, ырăлăхлă
патшасен Патши, хуçасен Хуçи тĕнчене Христоса ярĕ. [16] Турă –
пĕртен-пĕр вилĕмсĕрскер, çитме çук çутăра пурăнаканскер, этем-
сенчен пĕри те Ăна курман, кураяс та çук. Вăл ĕмĕр-ĕмĕр мух-
тавлă та хăватлă! Аминь.

[17] Ку тĕнчере пуяннисене каласа ӳкĕтле: вĕсем хăйсене ытлаш-
ши мăнна ан хуччăр, ултавлă пуянлăхне мар, чĕрĕ Турра шанч-
чăр. Пире савăнса пурăнма мĕн кирлине Турă туллин парать.
[18] Пуянсене ырă ĕç тума ӳкĕтле, вĕсем ырă ĕçĕсемпе пуян пулч-
чăр, укçи-тенкине ан хĕрхенччĕр, яланах пулăшма хатĕр пулччăр.
[19] Çапла тусан вĕсем ĕмĕрлĕх пурăнăçа кĕмешкĕн мул пухĕç. Çав
мул вара – пуласлăхăн çирĕп никĕсĕ.

[20] Тимофей! Хăвна шанса панине упра. Пуш сăмахран тата пĕ-
лӳ текен, анчах чăнлăха хирĕçлекен суя сăмахран пăрăн. [21] Шел
пулин те, хăшĕ-пĕрисем, çавнашкал пĕлӳ хыççăн кайса, ĕненӳ-
рен пăрăнчĕç. Сана Турă тивлечĕ пултăр. Аминь.